**Вирьял тусăмсене**

*Николай Мартынова*

Чарлан пекех хура ураллă

Вирьял пикисене салам!

Тури чăвашăн хӳхĕм ялĕ,

Мĕнпе сана хисеп тăвам?

Каç шуçăмĕ сĕвем-сĕвемĕн

Кĕрен те симĕс тĕрленсен

Илемĕре аса илем-и,

Йăмраллă, сулхăн урамсем?

Уй хапхисем çинче вулатăп:

«Çӳрес пулать хупса, чипер».

Хапхăрсене вара хупатăп, —

Çырни ан юлтăр çырнипе.

Улăхпала утса пыруçан

Пыл шăршине туйма аван,

Ыр кăмăл пек таса та уçă,

Тăп-тăр шывпа пите çăван.

Кăпăкланса кăна лараççĕ

Шур шупăр уртнă çĕмĕртсем, —

Шăпах çапла капăрланаççĕ
Вăййа тухма анатрисем.

Хĕстернĕ кĕпине тирпейлĕ, —
Шывран килен шур хур пекех
Ытарма çук яка та меллĕ
Утса килет маттур пике.

Ик витринчи çăл куç ахахĕ
Ан тăкăнтăр — хуллен утать.
Куллен çапла шыва утсах-и,
Тен, хĕр утти ĕлккен пулать.

Çемçен, тăсса, юрланă евĕр
Сăмах хушать мана пике.
Калаçуран сисет те:
«Эсĕр Катарисем пулатри-ке?»

Кĕретĕп урама. Туй халăх
Ик чун пĕрлешнине чыслать.
Хĕрсем шур шупăрлă, тухьяллă —
Шăп «Айтарти» пек туйăнать.

Анчах йыша кĕрсен туятăн

Хальхи кунсен ҫӗнӗлӗхне:
Туй ӑшшипе ҫӗкленнӗ ватӑ
Хӗрсех тӗвет «Подгорнӑйне».

Ав, Киев хӳтлевҫи пуҫарнӑ:
«Сердитій вітер завіва».
Клуб пуҫӗ Карима куҫарнӑ,
Вулать «Ҫӗн ҫынсене» сӑвва.

Хӗрпе качча урра ҫӗклеҫҫӗ —
Йӑлтӑртатаҫҫӗ медальсем.
Хӗр ташшине хӗрсех ӗнтеҫҫӗ
Хура халатлӑ инкесем...

Халь эп татах та хисеплетӗп
Сире — вирьял тусӑмсене,
Йӑлӑрсене те, чӗлхӗре те,
Чемей ялне, Йӑван уйне.

Шарпаш, Ҫухра, Сӑнар тавращӗ,
Патӑрьелпе Ҫӗньял тавраш —
Палатайпа Крепков чӑвашӗ —
Пӗр туслӑ ҫемьери чӑваш.

Мăн Атăла кĕрсе юхаççĕ

Пĕр шыв пулса Вылпа Пăла,

Мăнаçлă тинĕсре шавлаççĕ

Тапса сикен хăватпала.

Çĕршер чĕлхеллĕ те çĕр ятлă

Тăванлă халăх йышĕнче

Эпир те туслăхпа хăватлă

Пуласлăхăн кĕрлевĕнче.

*Айхи, Г. Вирьял тусăмсене : [сăвă] // Айхи, Г. Сăвăсемпе поэмăсем / Г. Айхи. – Шупашкар, 1994. – С. 10-12.*